*Шупашкарти 47- мĕш шкул ачисен хаçачĕ*

# ШĂНКĂРАВ

*9 №2026, нарăс уйăхĕ*

## *Ку кăларăмра:*

1. **Шкул директорĕн Кириллова Р.И. саламĕ.**
2. **2026-мĕш çул - Халăхсен туслăхĕн çулталăкĕ.**
3. **Эпир тăван çĕршывăн шанчăклă хӳтĕлевçисем.**
4. **Тав сăмахĕ, вĕрентекенĕмĕрсем сире!**
5. **Шкул пурнăçĕнчен. Асра юлнă самантсем…**

*Ырă сăмах каланăшăн чĕлхӳ типмест.*
*Пĕр чĕлхе-пĕр ăс, икĕ чĕлхе –икĕ ăс.*

Чĕлхе çынсене пĕр-пĕринпе калаçма, пĕр-пĕрне пĕлӳ пама кирлĕ. Чĕлхепе усă курса çынсем хăйсен туйăмĕсене палăртаççĕ. Ăшă сăмахсем ырă туйăмсене палăртма кирлĕ, усал сăмахсем – курайманлăха. Лайăх сăмахсем çынна савăнтараççĕ, хаяр сăмахсем кӳрентереççĕ сывлăха хавшатаççĕ.

Чĕлхери сăмахсемпе усă курса писательсем калавсем, романсем çыраççĕ, поэтсем-сăвăсем, поэмăсем…

Чăваш чĕлхи вăл чи çепĕç те илемлĕ чĕлхесенчен пĕри. Чăваш чĕлхи анне чĕлхи, вăл шăпчăк сасси пек илемлĕ, вăл пур чухне эпир телейлĕ. Çак чĕлхепе хитре калаçар, туссем!

***Редактортан***




Хисеплĕ ĕçтешсем!

Сире Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе чунтан саламлатăп! Тăван çĕр-шыва хӳтĕлесси – кашни çыннăн сумлă та сăваплă тивĕçĕ.

Хаклă арçынсем, ятарлă çар операцине хутшăнакансем, çар çыннисемпе запасри салтаксене те чи ăшă тав сăмахĕсем калас килет. Кашни арçын хăй çемйишĕн кил тĕрекĕ, тăванĕсемпе çывăх çыннисемшĕн çирĕп шанчăк пулма тивĕçлĕ.

Уяв ячĕпе саламласа сире, пирĕн юратнă арçынсем, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, пархатарлă ĕçсенче ăнăçу, çемьере килĕшӳ, лăпкă пурнăç сунатăп. Раççейĕн хăюллă та патвар салтакĕсене ăшшăн саламлатпăр, хăйсен тивĕçĕсене тĕрĕс пурнăçласа пынишĕн савăнатпăр, вĕсемпе мухтанатпăр!

***Р.И.Кириллова, шкул директорĕ***

# 2026-МĔШ ÇУЛ – ХАЛĂХСЕН ТУСЛĂХĔН ÇУЛТАЛĂКĔ

*Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев 2026 çула Чăваш Республикинче Халăхсен туслăхĕн çулталăкĕ пулнине çирĕплетекен Указа алă пуснă. Халăхсен туслăхĕн çулталăкĕ культура, вĕрентӳ тата спорт мероприятийĕсем ирттерме хăватлă вăй пулса тăрĕ, çакă чăваш çĕрĕнче пурăнакан пур халăхăн йăли-йĕркипе, чĕлхисемпе искусствипе таранрах паллашма май парĕ. «Пирĕн тĕллев- çак çул пĕр-пĕрне ăнланмалли тата та тачăрах чăмăртанмалли вăхăт пултăр тесе мĕн пур условие туса парасси.*

*Çак çула пĕрле чăн-чăн ĕçсемпе, çĕнĕ проектсемпе тата ырă пуçарусемпе тултарар, пирĕн тĕп пуянлăха- çынсем хушшинчи туслăхпа килĕшӳве – упраса, ӳстерсе пырар», – тенĕ регион ертӳçи.*

*Çынсене уйăрма тăрăшакан вăй çав тери нумай тĕнчере, пирĕн тĕп тĕллев - пире пĕрлештернине упрасси. Халăхсен туслăхĕн çулталăкĕ пурне те пĕрле, влаç органĕсенчен пуçласа ахаль çынсем таранах, чăн-чăн шанăç хӳтлĕхне йĕркелеме май парать. Çынсем хăйсен культурине хисеплени туйсан ыттисене те хисеплеççĕ, кӳренӳ, ăнланманлăх валли сăлтав та çухалать…*




## Хурăнташлă чĕлхесем.

Çĕр çинче 6000 яхăн чĕлхе теççĕ. Хăш-пĕр чĕлхе пĕр-пĕринпе хурăнташлă. Хурăнташлă чĕлхесем çемьесем тăваççĕ, ушкăнсене пайланаççĕ.

Вырăс чĕлхи индоевропа чĕлхинчи славян ушкăнне кĕрет. Славян чĕлхисем виççе пайланаççĕ: анăç, тухăç, кăнтăр. Тухăç ушкăнне вырăс, украин, белорус чĕлхисем кĕреççĕ.

Хурăнташлă чĕлхесенче нумай сăмахсем пĕр пек илтĕнеççĕ. Сăмахран, тăванлăха пĕлтерекен сăмахсем - вырăс, украин, белорус, болгар, поляк, чех чĕлхисенче. Акă отец сăмах белорусла айцец, болгарла отец, чехла отес пулать. Мать сăмах белорусла маци, болгарла мамо пулать. Сестра сăмаха белорусла сестра, болгарла сестра, полякла сиостра, чехла сестра теççĕ.

## Туссем ал пана яланах.

Тăванлăх. Туслăх. Мĕн тери
Хăватлă, сумлă сăмахсем!
Ал тытăр, Пĕтĕм тĕнчери
Таса чĕреллĕ халăхсем!
Сыхлар çавра Çĕре, Мире.
Тăванлăх-туслăхра – тивлет.
Ахаль-им сар хĕвел пире
Хĕрӳ кун-çул шевли пиллет...

***А.Лукин***

*ХАЛĂХРА-ВĂЙ*
*ХАЛĂХРА МИР, ТЕÇÇĔ*
*ХАЛĂХ ХАВАЛĔ-ХĔВЕЛ ВĂЙ-ХАЛĔ*
***Ваттисен сăмахĕсем***

## Полиглот
(Шӳтлĕ сăвă)

-Полиглот мĕн тени? -
Ыйтрăм эп аттерен.
- Пит нумай чĕлхе пĕлни, -
Вăл мана пĕлтерет.

Полиглот, полиглот...
Ĕмĕте хускатать.
Полиглот, полиглот...
Илеймĕп-ши вăл ята?

Тытăнтăм вĕренме
Тутарла, вырăсла.
Халĕ сенкью вырăнне
Мерсилеп французла.

Вĕренетĕп пĕрмай
Нимĕçле, испанла.
Ак пуçларăм ăнкарма
Китайла, японла.

Ĕç ăнать-çке ытла.
Ку çĕклет кăмăла.
Пăлхарла, латинла
Ăнланап çăмăлах.

***Петĕр Ялгир***

# 2026-МĔШ ÇУЛ – ХАЛĂХСЕН ТУСЛĂХĔН ÇУЛТАЛĂКĔ

## Раççей – нумай нациллĕ çĕршыв.
## Унăн территорийĕнче 160 тĕрлĕ халăх пурăнать.

Чăваш республикинче ытларах чăвашсем пурăнаççĕ. Чăваш халăхĕн историйĕ вăрăм.

Чăваш чĕлхи -чăваш халăхĕн наци чĕлхи. Чăваш чĕлхин алфавит пур, вăл хăйне евĕрлĕ янăравлă. Çак чĕлхене Раççейри чылай регионта илтме пулать: Тутарстанра, Пушкăртстанра, Самар, Ульяновск, Саратов, Пенза облаçĕсенче, Урал, Атăлçи тата Çĕпĕр тăрăхĕсемпе республикисенче те сарăлнă.

«Иртнине манакан халăхăн пуласлăхĕ çук" – теççĕ ваттисем. Чăваш халăхĕн культури те хăйне евĕрлĕ пуян. Ахальтен мар чăвашсен çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ тата çĕр пин сăмах çĕршывĕ.

Халăх йăла-йĕркине тăрăшса упрать. Кирек мĕнле уявăн та хăйĕн илемĕ. Чăвашсен чи пысăк та паллă уявсенчен пĕри-Мăнкун.

Çак уяв халăхшăн чи таса та çутă уяв шутланать. Аслисемпе ачисем çĕнĕ тумтир тăхăнаççĕ, чиркĕве каяççĕ. Хĕрарăмсем хăйсен пӳрчĕсене тирпейлеççĕ, кăмакисене шуратаççĕ, арçынсем картишне йĕркене кĕртеççĕ. Мăнкун тĕлне сăра вĕретеççĕ, кукăль пĕçереççĕ, çăмарта сăрлаççĕ, наци апат-çимĕçне хатĕрлеççĕ. Мăнкун çичĕ куна тăсăлнă, вĕсем хаваслăхпа, вăййăсемпе, юрăсемпе тата ташăсемпе савăннă. Чăваш уявĕсем татах та нумай.

Чăваш халăхĕн маттур хĕрĕсемпе ывăлĕсем тĕлĕнмелле хитре костюмĕсене тăхăнаççĕ.

Чăвашсем - сăпайлă, ĕçчен, чăтăмлă. Вĕсем пур халăхпа та туслă пурăнма тăрăшаççĕ.













## Пĕлме интереслĕ.

Кашни чĕлхере тĕлĕнтермĕшсем пур. Сăмахран, Франци колонийĕ пулнă Гвинейăра таки чĕлхи пур. Çак чĕлхере 340 сăмах çеç.

Кăнтăр Америкăра пирахан чĕлхи пур. Çак чĕлхепе 200-300 çын çеç калаçать. Пирахан чĕлхинче 13 фонема кăна. Чи тĕлĕнмелли: чĕлхере виçĕ хисеп ячĕ çеç. Вĕсен вырăсла пĕлтерĕшĕсем çапла: «один», «больше, чем один», «много».

Дагестанра цез чĕлхи пур. Çак чĕлхепе 12 пин ытла çын калаçать. Цез чĕлхин грамматики питĕ йывăр, мĕншĕн тесен çак чĕлхере 64 падеж.

Лаосăн официаллă чĕлхи – лаос чĕлхи. Чĕлхен литература норми çук. Çĕршывăн кашни районĕ хăйĕн чĕлхе варианчĕпе усă курать. Çак чĕлхере çырура сăмахсем хушшинче хушăсем (пробел) хăвармаççĕ.

Бугенвиль утравĕнче пурăнакансем ротокас чĕлхипе калаçаççĕ. Ротокас чĕлхинче 15 саспалли çеç.

Грек чĕлхинче ыйтуллă предложени хыççăн точкăпа запятой (;) лартаççĕ.

Армянсем предложени вĕçĕнче точка лартмаççĕ, икĕ точка (:) лартаççĕ.

Дагестанри табасаран чĕлхинче 40 ытла падеж.

Эскимос чĕлхинче хальхи вăхăтăн (настоящее время) 63форма.

# ЭПИР ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ШАНЧĂКЛĂ ХӲТĔЛЕВÇИСЕМ

*Вĕреннĕ чух йывăр – çапăçура çăмăл*
*Пĕри - пуриншĕн, пурте пĕриншĕн*
*Хăюлли çĕнтерет – хăравçи тарать*

Пĕтĕм Раççейри «Герой Парти» вĕренӳ проектне хутшăнса пирĕн шкулта патриотла пĕлтерĕшлĕ пысăк мероприяти иртрĕ. Ку мероприятие Тăван Çĕршыв Паттăрĕсен Кунне халалланă. Эпир хамăр шкултан вĕренсе тухнă Павлов Денис Владимирович, Самсонов Александр Иванович, Магеррамов Заур Захидович ятарлă çар операцийĕнче паттăрла пуç хунисене асăнса пуç тайрăмăр. Шкулта хисеплĕ хăнасем пулчĕç: Чăваш Республикин Вĕрентӳ Министерствин шкул умĕнхи тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан пай пуçлăхĕ М. А. Николаева, Чăваш Республикин çар комиссарĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан А. Н. Колесник, Чăваш Республикинчи ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйĕ А. Н.Федорова, Шупашкар хула депутачĕсен пухăвĕн депутачĕ М. В. Варлашкин, «Время СВОих» программăна хутшăнакан В.С.Сергеев, «Воин» Центр инструкторĕ, СВО участникĕ А.В. Ефремов, гварди рядовойĕ тата СВО участникĕ С.П. Егоров, сывлăш-десант çарĕсен подполковникĕ В. Г.Антонов. Мероприятие






паттăрсен тăванĕсемпе çывăх çыннисем хутшăнчĕç. Вĕсен сăмахĕсем, асра юлнă самантсем çак тĕлпулăва уйрăмах чуна пырса тиврĕç. Паттăрсене хисеп туса уçнă партăсем çине чĕрĕ чечексем, ялав хурса чысларĕç.Чăваш халăхĕн ывăлĕсемшĕн, хăйсен тивĕçне паттăрлăхпа шанчăклăх кăтартакансемшĕн çак мероприяти çав тери пысăк мăнаçлăх пулнине тепĕр хут ăнланса илтĕмĕр. Выпускниксемшĕн мăнаçланни мероприятие хутшăнакансене пурне те пĕрлештерчĕ, çамрăксен хушшинче истори астăвăмне упраса патриотизм воспитанийĕ парасси пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ.

Шкул директорĕ Р.И. Кириллова çемьесене çирĕп сывлăх, мирлĕ пурнăç сунса пĕлтерĕшлĕ мерорприятине вĕçлерĕ.

***А.Г. Петрова, И.В. Власова***
***чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем***



- **Тăван çĕршыв ~ Родина**
- **Аттелĕх ~ Отечество**
- **çĕршыв-анне ~ Родина-мать**
- **çĕршывăм ~ моя Отчизна**
- **хӳтĕлевçĕ ~ защитник;**



# Кадетсен юхăмĕ

Шкулсенче патриотла тата гражданла воспитани парас ĕç аталанса пырать. Хальхи вăхăтра çĕршыва чун-чĕререн парăнса, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме хатĕр патриотсем кирлĕ. Çын пуласси ачаран паллă. Чун çирĕплĕхне хытарма, ăс-тăн çивĕчлĕхне туптама мĕн пĕчĕкренех хăнăхмалла. Çакна тĕпе хурса вăтам шкулсенче кадет класĕсем уçма пуçларĕç. Чылай ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачине паха пĕлӳ пама кăна мар, хăй тĕллĕнлĕхе, яваплăха хăнăхтарма тăрăшать.

47-мĕш вăтам шкулта пĕрремĕш кадет класне 2014-мĕш çулта уçнă. Паянхи кун шкулта 5 кадет класĕ, вĕсенче 131 кадет вĕренет. Кадет класĕсем ытти ачасенчен атрибутсемпе уйрăлса тăраççĕ. Вĕсен кадет форми тата эмблеми пур.

Кадетсем шкултах çар ĕçне хăнăхаççĕ. Плац çинче утасси, тĕрлĕ хăнăхтарусем тăвасси вĕсемшĕн халь çĕнĕлĕх мар. Хĕç-пăшал салатса пуçтарма, автомат магазинне патрон тултарма та пултараççĕ. Кадет класĕсенче вĕренекенсем стройпа хатĕрленессипе, спорт дисциплинисемпе, ташăпа туслă. Ачасем çăлавçăсен ĕçне тата кĕрешӳ мелĕсене вĕренеççĕ. Хушма занятисенче вĕсем çар ĕçĕн вăрттăнлăхĕсемпе паллашаççĕ.

Кадетсем çулсерен Республика, хула шайĕнчи ĕç-пуça хастар хутшăнаççĕ, вĕренӳре тата спортра пысăк çитĕнӳсемпе палăраççĕ. Республикăра кадетсем пĕрре мар çĕнтерӳçĕ ята тивĕçнĕ.

Пирĕн шкулта кадет класĕсене Максимов Максим Константинович ертсе пырать. Вăл пултаруллă педагогсенчен пĕри. Кадет корпусĕн ертӳçине эпир те темиçе çавра ыйту патăмăр.



**- Максим Константинович, шкулта кадет юхăмне пуçласа яма эсир мĕнле йывăрлăхсемпе тĕл пултăр?**

- Малтанах питĕ йывăрччĕ. Эпĕ кадетсемпе мĕнле ĕçлемелли çинчен нумай шутларăм. Анчах вăхăт иртнĕçемĕн, ытти шкулсенчи кадет ертӳçисемпе хутшăнса, пĕр-пĕрин опычĕсемпе паллашса ĕç интересленсе кайрĕ.Тĕрлĕ мероприятисене хутшăнма, ачасем улшăнса пынине курма интереслĕ пулчĕ.

**-Шкулти кадет класĕнче пĕлӳ илнин лайăх енĕсемпе çитменлĕхĕсене мĕнре куратăр?**

- Эпĕ лайăх енĕсене кăна куратăп. Ачасен пушă вăхăт сахал пулни, яланхи мероприятисене пула ывăнни те ачасене хавхалантарать, дисциплинăна лайăхлатать, ачасем хăюллăрах та хастартарах пулса пыраççĕ.

**-Максим Константинович, сирĕн выпускниксем хушшинче хăйсен пурнăçне çар ĕçĕпе çыхăнтаракансем пур-и?**

- Паллах пур. Кадет класĕнчен вĕренсе тухнă ачасем тĕрлĕ регионти çар училищисенче пĕлӳ илеççĕ, хăйсен пĕлĕвне аслă шкулсенче малалла тăсаççĕ.

Михайлов Давид Мускаври пĕтĕмĕшле çарсен аслă училищинче вĕренет. Анисимов Руслан, Яковлев Константин, Данилов Александр, Ларионов Максим «Пушар хăрушсăрлăхĕ» специальноçне суйласа илчĕç. Кăçалхи выпускниксем те Питĕрти тата Мускаври çар училищисене вĕренме кĕчĕç. Нумайăшĕ халĕ çар службинче Тăван çĕршыва хӳтелеççĕ.

**Максим Константинович, эсир кадетсен мĕнле пахалăхĕсене палăртатăр? Кадетсене эсир наставник пулнă май, мĕн суннă пулăттăр?**

- Чи малтанах тавçăрулăх, тӳрĕ кăмăллăх, хăйне хăй парăнса ĕçлесси. Хăйĕн Тăван çĕршывĕн, халăхĕн, хăйĕн çемйин историне пĕлекен, хисеплекен, мăн асаттесен патттăрлăхĕпе мухтанакан, хăйĕн çĕршывĕшĕн пăшăрханакан çын çеç чăн-чăн гражданин пулма пултарать. Пирĕн хамăр çемье историйĕн паттăр страницисене пĕлмелле, çывăх çынсемшĕн мăнаçланмалла. Ман шутпа, шкулта кадет класĕсем йĕркелени çамрăксене хăйсен çĕршывне, унăн историйĕпе йăли-йĕркине юратма, çĕнĕ йăла-йĕркесем йĕркелеме пулăшать. Кашни вĕренекенех çирĕп сывлăх йĕркине тытса пырсан, шкулта тăрăшса вĕренсен - Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ пулать.



Головина Ольга Васильевна, кадет класĕн ертӳçи пулнă май, ачасене Тăван çĕршыва юратма тата унпа мухтанма, кирек хăш самантра та хамăр çĕршыва хӳтĕлеме хатĕр пулма вĕрентет.

*О.В.Головина, И.В Власова*
*чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем*

# ТАВ СĂМАХĔ, ВĔРЕНТЕКЕНĔМĔРСЕМ СИРЕ!




*Кашни ачан пурнăçĕнче шкул пысăк пĕлтерĕшлĕ. Шкул пысăк пĕлӳ парать. Пурнăç тăршшĕпех ачана лайăх, ăслă-тăнлă пулма вĕрентет, çав вăхăтрах тата ачасене воспитани парать, Тăван çĕршыва, ĕçе юратма хăнăхтарать. Вăл пирĕн характера çирĕплетет, йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентет. Шкулта ачасем çĕнтерӳсен пĕрремĕш савăнăçне тӳссе ирттереççĕ. Шкултах чăн-чăн туссене тупаççĕ.*

*Пирĕн шкулти 11-мĕш класс ачисем вĕрентекенĕсем çинчен çыраççĕ…*

***Васильева Яна, Шемекеева Милана:***

- Пирĕн шкул пысăк, çутă, илемлĕ. Эпир ку шкулта пĕрремĕш класранах тăрăшса вĕренетпĕр.

Уйрăмах пире Светлана Тимофеевна, Надежда Степанова, Наталья Валерьевна вĕрентекенсем çывăх. Вĕсем пирĕн шкулта нумай çул ĕçлеççĕ.

Вĕрентекенсен ĕçĕ çăмăлах мар пулин те пирĕн уроксем яланах интереслĕ иртетчĕç.Кашни урокрах вĕрентекенсем тĕрлĕ заданисемпе хăнăхусем шухăшласа кăларатчĕç. Эпир, вĕренекенсем, çак уроксене яланах асра тытăпăр. Паллах, шкулпа сывпуллашма вăхăт çитсе те пырать ĕнтĕ, анчах та юратнă 47-мĕш шкул яланах пирĕн чĕресенче юлĕ.

Эпир юратнă вĕрентекенсене çирĕп сывлăх, малашне те тăрăшса ĕçлесе пысăк çитĕнӳсем тума вăй-хал сунатпăр. Кашни кунах сирĕн ырлăх, телей, савăнăç пултăр! Эпир сирĕн уроксене яланах асра тытса пурăнăпăр!

***Волостригова София:***

- Манăн юратнă вĕрентекенĕм Наталья Николаевна Иванова, вăл пире вырăс чĕлхи вĕрентет. Кирлĕ пĕлӳсене кашни вĕренекен патне çитерме тăрăшса, вăл урока сапăрлăхпа ăнлантарса парать. Наталья Николаевна хăйĕн вĕренкенĕсене тĕрлĕ енлĕ аталантарать. Унăн вĕренекенĕсем час-часах сăвă конкурсĕсене, олимпиадăсене хутшăнаççĕ, лайăх результатсем кăтартаççĕ.

Вĕрентекен пирĕпе яланах кăмăллă калаçать, йывăрлăхсенче пулăшать. Эпир вăл ирттернĕ уроксене яланах асра тытăпăр.Тавтапуç сире Наталья Николаевна, вырăс чĕлхипе литературине юратма вĕрентнишĕн.

***Капустин Николай, Никонорова Мария:***

- Эпир хамăрăн вĕрентекене Эльвира Геннадьевна Григорьевнăна пĕрремĕш хут тĕл пулнă кун – чи çутă та савăнăçлă кунсенчен пĕри тесе шутлатпăр. Ку вăл пирĕншĕн шкулпа, вĕрентекенпе тата çĕнĕ туссемпе паллашнă кун пулчĕ – сентябрĕн пĕрремĕшĕ!



«Сывлăх сунатăп сире, эсир манăн çĕнĕ вĕренекенĕмсем?! Атьăр класа!» – тесе чĕнчĕ пире вĕрентекен йăл кулса. Класа кĕрсен эпир питĕ савăннине тата хĕпĕртенине астăватпăр. Пирĕн класс пӳлĕмĕ питĕ илемлĕ, таса, çутă тата тирпейлĕ пулни халĕ те асра.

Малтанхи кунсенчех вĕрентекен пире тăван чĕлхене, халăха, тăван çĕршыва, культурăна юратма тата хаклама вĕрентме пуçларĕ. Пире пурне те ансат чĕлхепе, сăмахпа ăнлантарса панăран, малтанлăха питĕ йывăр пулнă темăсене те хăвăрт алла илеттĕмĕр. Тĕлĕнмелле лайăх вăхăт вăл шкулта вĕреннĕ кунсем, çулсем…

Хаклă Эльвира Геннадьевна, пĕрремĕш вĕрентекенĕмĕр! Сире çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул тата шкулта нумай-нумай çул ĕçлеме хал сунатпăр. Эпир сире юрататпăр, хисеплетпĕр, эсир вĕрентнĕ сăмахсене эпир яланах асра тытăпăр.

# ТАВ СĂМАХĔ, ВĔРЕНТЕКЕНĔМĔРСЕМ СИРЕ!

***Краснов Леонид:***

- Вĕрентекен- пархатарлă, çавăн пекех питĕ кирлĕ професси. Манран санăн юратнă вĕрентекен кам тесе ыйтсан, эпĕ тӳрех хама акăлчан чĕлхине вĕрентекенне Екатерина Юрьевна Бариновăна аса илетĕп.



Эпĕ ăна вĕрентекен пулнăран çеç мар, сăпайлă çын пулнăран та юрататăп, хисеплетĕп. Екатерина Юрьевна питĕ усă кăмăллă та сапăр вĕрентекен, хăйĕн предметне питĕ юратать. Вăл пире акăлчан чĕлхине юратма тата хисеплеме вĕрентет. Унăн урокĕсем питĕ интереслĕ иртеççĕ, эпир словарь запасне вĕренетпĕр, грамматика хăнăхăвĕсене тăватпăр.
Ектерина Юрьевна ăшă кăмăллă та тимлĕ, пире ют чĕлхепе вĕрентет пулин те, эпĕ унăн урокĕсене çăмăллăнах ăнланатăп тата алла илетĕп.
Манăн юратнă вĕрентекенĕм яланлăхах ман асăмра юлĕ.

***Дронов Ариф:***

- Манăн юратнă вĕрентекенсенчен пĕри- Елена Владимировна Тюлина. Вăл пире биологи предметне вĕрентет.
Эпĕ «пиллĕк» тата «тăваттă» паллăсемпе çеç вĕренетĕп. Ку вăл манăн вĕрентекенĕн тӳпи. Елена Владимировна пире хамăр тĕллевсене çĕнсе илмелле, нихçан та парăнмалла мар тесе вĕрентет. Биологи урокĕсем яланах асра юлĕç.
Эпĕ вĕрентекене çирĕп сывлăх, ĕçре пысăкран та пысăк çитĕнӳсем сунатăп.

***Юлия Романова:***

**Пĕрремĕш вĕрентекен**

Пĕрремĕш вĕрентекен яланах асра юлать.
Манăн пĕрремĕш вĕрентекен –Людмила Федоровна Федорова. Людмила Федоровна нумай çул шкулта вĕрентӳ ĕçне парăнса ĕçлет, чылай ачана ăс парса пурнăç çулĕ çине тăратнă.
Пултаруллă вĕрентекен пĕтĕм ĕçрех хастар. Конкурссенче те, олимпиадăсенче те, наукăпа практика конференцийĕсенче те унăн вĕренекенĕсем чи малти вырăнсенче. Ачасемпе пĕрлех ашшĕ-амăшĕсене те шкул ĕçне явăçтарать. Тĕлĕнмелле ĕçчен тата ырă чунлă педагог! Хăйĕн вăхăтне шеллемесĕр ырми-канми тăрăшать вăл.
Эпĕ вĕрентекен умĕнче чĕререн пуçа таятăп, сывлăхпа-ырлăхпа тата нумай çул пурăнма сунатăп. Пурнăçри пĕтĕм ырлăх сирĕн пултăр, çурхи чечек пекех хитре пулăр!

Вĕрентекен. Пĕрремĕш. Чи хакли.
Пуçран шăлса илетчĕ те алли
Анне пек туйăнатчĕ хушăран,
Чĕре те лăпланатчĕ пăлхансан.
Пĕрремĕш класс. Янрать йĕс шăнкăрав.
Епле хавасчĕ, шавлăччĕ тăхтав.
«Ача купи» тăваттăмăр куллен
Вĕрентекен курса ĕлкĕриччен.
Тетрадь те пурă. Ак каллех урок.
Юлхавланма пĕрре те вăхăт çук.
Пĕлӳ тĕнчи усать хăй алăкне,
Чĕнет пире асамлă çĕрсене.
Вĕрентекен çумрах. Сасси йăваш.
Ертсе пырать. Парать сĕнӳ-канаш.
Ун çумĕнче эпир чĕпсем пекех,
Вĕренмелли те пирĕн тем чухлех.
Шкул çулĕ иртĕ. Тек чупаç çулсем.
Асра ялан ачалăх кунĕсем.
Пĕрремĕш класс. Юлташăмсен кулли.
Вĕрентекен. Пĕрремĕш. Чи хакли.

**Хаклă Римма Ивановна тата вĕрентекенсем!**

Вунпĕр çул хушши 47-мĕш шкул пирĕншĕн иккĕмĕш кил пулчĕ! Вĕрентекенсем те, столовăй ĕçченĕсем те, шкулти тасалăха тытса тăракансем те пирĕншĕн тăван çынсем пулса тăчĕç. Эсир пире тарăн пĕлӳ панишăн, пирĕнпе чăтăмлă пулнишĕн, вĕренӳре пулăшса пынишĕн тав тăватпăр. Иксĕлми вăй-хал, çирĕп сывлăх, пурнăçра телей сунатпăр. Чунра лăпкă пултăр сирĕн, килте вара хăтлă. Çывăх çынсем сире ан пăрахчăр, вĕсен ăшшипе хӳттине туйса ырă пурнăçпа пурăнмалла пултăр! Ырлăх ытамĕнче, телей тĕпелĕнче, юрату юхăмĕнче, сывлăх сăпкинче пурăнмалла пултăр сирĕн!

**ТАЙМА ПУÇ СИРЕ ВĔРЕНТЕКЕНСЕМ ТАТА ЮРАТНĂ ШКУЛ!**

# ШКУЛ ПУРНĂÇĔНЧЕН…

4Я-мĕш класра вĕренекенсем «Наука о превращениях» ятлă кружока çӳреççĕ. Ачасем хими тĕнчинче Д.И.Менделеев элеменчĕсемпе паллашаççĕ тата вĕсене тĕпчеççĕ. Кружокра интереслĕ опытсемпе экспериментсем тăваççĕ. Ачасем çĕнĕ экспериментсем çинчен савăнсах каласа параççĕ. Çавăнпа хими кружок занятийĕсене те хаваспах çӳреççĕ.



Н.В. Морозова пысăк опытлă педагог, пирĕн шкулта нумай çул хушши пуçламăш классенче ĕçлет. Уроксене кăна мар кружокăн кашни занятинех хаваслă та интереслĕ ирттерме тăрăшать. Надежда Валерьевна ертсе пынипе ачасем республикăри «Манăн юратнă юмахсем» конкурса та хутшăнчĕç. Ку конкурсра та ачасем сумлă Гран-при Дипломне çĕнсе илчĕç.

4Я-мĕш класс ачасен çĕнтерĕвĕсем питĕ нумай. Нумаях пулмасть вĕрентекен ертсе пынипе пĕтĕм тĕнче шайĕнче иртекен «Время писать книги» конкурсра та çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕç. Çĕнтерӳçĕсене Мускавра чысларĕç.

Пултаруллă вĕрентекене тата вĕренекенсене саламлатпăр, малашне те пысăк çитĕнӳсем тума сунатпăр.

## САЛАМЛАТПĂР!

Раштав уйăхĕнче Шупашкар хулинче чăваш чĕлхипе тата литературипе олимпиада иртрĕ. Муниципалитет тапхăрĕн çĕнтерӳçисемпе призерĕсене саламлатпăр. Олимпиада **çĕнтерӳçисем:**

1. Яковлева А,7 класс
2. Кудрина С., 8класс
3. Белкова У., 8класс
4. Филиппова А, 8 класс
5. Романова Ю.,11 класс
6. Абророва А.,10 класс

***Вĕрентекенĕсем: Власова И.В,***
***Головина О.В.***

***Олимпиада призерĕсем:***

1. Ершова А.,7 класс
2. Жаброва А.,7 класс
3. Краснова А.,7 класс
4. Лукин М.,7 класс
5. Емельянова У., 8 класс
6. Иванова М., 8класс
7. Петрова А., 9 класс
8. Тимофеева М.,9 класс
9. Матвеева Л.,9 класс
10. Шемекеева М.,11 класс
11. Дронов А.,11 класс

***Педагог-наставникĕсем Петрова АГ., Головина О. В., Власова И.В.***

## Стипенди тăрăшса вĕренме хавхалантарать





Тăрăшуллă та пултаруллă, малалла ăнтăлакан çамрăксене Республика Пуçлăхĕн Олег Николаевăн стипендине пама йышăннă хушăвĕнче 47-мĕш шкул вĕренекенĕсем те пур. Вĕсем –Нелли Галлямова тата Анастасия Гаврилова.

***Нелли Галлямова*** - питĕ тăрăшуллă хĕрача, вуннăмеш класра вĕренет, вĕренӳре те спортра та пысăк çитĕнӳсем тăвать. Нелли спорт мастерăсен кандидачĕ, вăл акробатика енĕпе те вăйлă.

***Анастасия Гаврилова*** - тĕрлĕ енлĕ маттур хĕрача, вунпĕрмĕш класра ăс пухать, вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пырать, уроксене яланах тĕплĕн хатĕрленет. Шкулта вĕреннĕ вăхăтра пултарулă хĕр ача тĕрлĕ проектсене хутшăнать. «Элегия» ташă кружокне çӳрет.

Эпир вĕренекенсене саламлатпăр, малашне те пысăк çитĕнӳсем тума сунатпăр!!!

Ответственный редактор: И.В. Власова
Верстка тата дизайн: И.В. Власова, Т.Н. Селиванова
Редакци адресĕ: 428000, Шупашкар
Кăкшăм урамĕ, 23 çурт, 47-мĕш шкул, 102 к